Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчене пуҫласа тухать

72 (8033) № ✻ Юн кун, 2012 ҫулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 19-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Район аталанăвне тӳпе хываҫҫĕ

**Пĕчĕк тата вăтам бизнес кун-ҫулĕ**



**Районти пĕчĕк тата вăтам бизнес аталанăвĕнче Леонид Геннадьевич Ильгечкин ертсе пыракан «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество хăйне евĕр курăмлă вырăн йышăнать. Производствăри чи ăнăҫлă технологисене алла илесҫĕ тейĕн вĕсен ĕҫне курса хакласан. Пытармăп, ҫапла тăвакан йăнăшмĕ тата Мăнсĕнтĕрсен ĕҫĕнче пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăн пĕтĕмĕшле ыранхи ҫул-йĕрне курĕ.**

**«Сундырь-Хлеб» общество – Мăн Сĕнтĕр райповĕн ҫăкăр комбиначĕ пулса хăйĕн историне 1965 ҫулхи раштав уйăхĕн 23-мĕшĕнче ҫырма пуҫланă. Пĕрремĕш кунранах ҫанă тавăрса ĕҫе кӳлĕннĕ коллектив паян та ĕҫ кăтартăвĕсене ӳстерсех пырать. Тăрăшуллă Мăнсĕнтĕрсен ячĕ историн ҫак кĕске тапхăрĕнче районта ҫеҫ мар, унăн тулашĕнче те ырăпа сарăлчĕ. Вĕсен продукцине туянакансем ялан кĕтеҫҫĕ.**

**Чикĕллĕ яваплăхлă общество кăҫал та аталану ҫулĕпех пырать. 8 уйăхра кунта 24963 пин тенкĕлĕх продукци кăларнă. Уйрăм тĕссемпе пăхсан ҫăкăр пĕҫересси 663 тоннăпа, кондитер изделийĕсем хатĕрлесси 162 тоннăпа танлашнă. Кунсăр пуҫне ҫак вăхăтра заводра вуншар тонна макарон изделийĕ тунă, 65 пин декалитр пылак шыв кăларнă.**

**– Тупăш та, рентабельлĕх те ҫулсерен ӳссе пыни эпир тĕрĕс ҫул ҫинче пулнине ҫирĕплетет. Ҫакна пирĕн кашни ĕҫчен пĕлет тата курса тăрать. Савăнпа та ответлăх пурин те чи ҫӳллĕ шайра, – терĕ обществăн тĕп бухгалтерĕ Людмила Валентиновна Морева (сăн ӳкерчĕкре малта). Хăй вăл ҫак предприятире 1974 ҫулта ҫăкăр пĕҫерекен пулса ĕҫлеме тытăннă. 1976 ҫултанпа бухгалтери ĕҫĕнче тимлет. Надежда Филимоновна Захарова экономистăн та предприятири ĕҫ стажĕ 21 ҫул. Вăл кунта – династи тăсăмĕ. Унăн амăшĕ – София Ивановна Пикушкина – заводра пĕрремĕш кунранах тĕп бухгалтерта ĕҫленĕ. Паянхи чикĕллĕ яваплăхлă обществăра Цветковсен, Якутовсен династийĕсем те – ыттисемшĕн ырă тĕслĕх.**

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Район уй-хирĕсенче**

## Кулленех ĕҫре

Юлашки кунсенчи уяр кунсем никама та килте лартмаҫҫĕ. Ыранхи кунпа пурăнакан ҫак вăхăтпа усă курса ытларах ĕҫ пурнăҫлама тăрăшать. Ҫапла вара район авăн уйăхĕн 18-мĕшĕ тĕлне тĕш-тырăпа пăрҫа йышши культурăсене пурĕ 11678 гектар (91 процент) ҫинчен пуҫтарса кĕртнĕ. Гектар пуҫне тивекен вăтам тухăҫ – 17 центнер.

Тырă вырнипе пĕрлех хуҫалăхсем ҫĕр улми кăларассипе те тимлеҫҫĕ. Ҫак вăхăта вĕсем пĕтĕмпе 156 гектар (16 процент) ҫинчи «иккĕмĕш ҫăкăра» кăларса илнĕ. Вăтам тухăҫ – 172 центнер.

Хуҫалăхсем 3814 гектар (69 процент) кĕрхи культурăсем акса хăварнă. «Путь Ильича» агрофирмăра, «Восток» хуҫалăхра, «Колос» обществăра тата В. Бархаткин, А. Толстов, А. Пихтеров ертсе пыракан хресчен (фермер) хуҫалăхсенче ака планне тултарнă.

**Хамăр инф.**

**Районта**

## Паян – пĕрлехи информаци кунĕ

Паян районта черетлĕ пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Ĕҫлĕ ушкăнсем районти ҫынсемпе тĕл пулса тĕрлĕ ыйтупа калаҫҫĕ: Чăваш Республикинчи финанспа бюджет политикине реализацилессипе ĕҫ тăвакан влаҫ органĕсем тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем эффективлă ĕҫлесси пирки, муниципаллă пурлăхпа тата ҫĕр лаптăкĕсемпе эффективлă усă курасси, вырма ĕҫĕсем пирки, ял хуҫалăх ярмăрккисене йĕркелесси пирки тата ыт. те.

# Манмăпăр

*«Ударник» хуҫалăх ертӳҫи Платон Павлович Давыдов пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайрĕ. Унăн ҫутă сăнарĕ ҫемйипе тăванĕсен асĕнче кăна мар, унпа куллен ĕҫленĕ, ăна пĕлнĕ ҫынсен асĕнче ĕмĕр упранĕ.*

**В.С. КРАСНОВ, 1976-1979 ҫулсенче Муркаш райĕҫтăвком председателĕнче, 1979-1990 ҫулсенче КПСС Муркаш райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче ĕçленĕ:**

– П.П. Давыдов – чăн-чăн ҫĕр ĕҫченĕччĕ, талантлă тата йĕркеллĕ ертӳҫĕччĕ.

Вăл ялан наукăпа туслă пулнă. Ҫĕр ĕҫне те, выльăх-чĕрлĕх ӳстерессине те наука ҫинче никĕслесе туса пыратчĕ. Ҫĕнĕлĕхсене курма, вĕсене вăя кĕртессишĕн ҫине тăма пĕлетчĕ. Ҫакă кашни ертӳҫĕрен пулмасть.

Вăл «Ударник» чиккипе ҫырлахман, ăна пĕтĕм район аталанăвĕ кирлĕччĕ. Платон Павлович Йӳҫкассине Чапаев ячĕпе хисепленекен хуҫалăх урлă ҫул ҫитерчĕ. Вăлах Панклипе ҫул тутарчĕ.

Эпĕ Сурăм тăрăхĕнче 1968 ҫулта пулнине астăватăп. Кĕрсе тухма ҫук лапраччĕ унта. Ферма ҫурчĕсем кивĕччĕ, Культура ҫурчĕсем пулман.

П. Давыдов тăрăшман пулсан района газификацилес ĕҫ те каярах юлса пуҫланатчĕ. Вăрманкас ялĕ пуҫĕнче автоматла газ валеҫекен станци (АГРС) лартни – унăн ĕҫĕ. Сĕнтĕр тăрăхне те вăл тăрăшнипе газ ҫитрĕ.

Ахальтен мар ĕнтĕ ял ҫыннисем П. Давыдова нумай хутчен районăн тата республикăн аслă органĕсене депутата суйларĕҫ.

Платон Павлович хăйĕн шухăшне тӳррĕн калама пултаратчĕ. Ҫапла, вăл хăйне евĕрлĕ ҫыннччĕ. Шел, пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайрĕ.

Вăйлă юлташа ҫухатрăм эпĕ...

**В.Г. ДАНИЛОВ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ:**

– Эпĕ хамăн чи ҫывăх туса ҫухатрăм. Эпир унпа ĕҫре те, пурнăҫра та яланах ҫывăх канашҫăсем пулса. Вăл пирĕн хушăран вăхăтсăр уйрăлса кайни – питĕ хурлăхлă самант. Яланах килĕшуллĕ ĕҫленĕрен пĕр самант асра. 1990 ҫулта ЧР Аслă Канашĕн депутачĕсен суйлавĕнче унăн йышне Платон Павловичпа пĕрле манăн суйланмалла пулчĕ. Чăваш Республикин Правительствине йĕркелессине ирттернĕ 1-мĕш сессире ăна ЧР Министрсен Совечĕн Председателĕн (М. Зайцевăн) ял хуҫалăхпа ĕҫлекен ҫумĕ пулма сĕнчĕҫ. Сесси хыҫҫăн Платон Павлович ку сĕнĕве манпа чылай сӳтсе яврĕ. Пĕтĕмлетӳ: вăл «Ударник» хуҫалăхрах юлма йышăну турĕ. Анчах та Аслă Канашăн ял хуҫалăхĕпе ĕҫлекен комитет членĕ пулнă май тата хăй те ял хуҫалăхне алă тупанĕ ҫинчи пек курса-пĕлсе тăнă май республикăшăн та, Чăваш Енри хресченлĕхшĕн те пысăк та усăллă ĕҫсем турĕ.

Платон Павлович ЧР Патшалăх Канашĕн 1-мĕш созывĕн депутатне суйланнă чух вăл мана шаннă ҫынни пулма ыйтни те пирĕн хушăмăрти ҫыхăну туслăх ҫинче йĕркеленнине калать.

**И.В. НИКОЛАЕВ, Ильич яч. хис. хуҫалăх ертӳҫи, район Пуҫлăхĕ:**

– П.П. Давыдов пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайни Муркаш еншĕн пысăк ҫухату тесе шутлатăп. Тĕрĕссипе манăн хамăн та чĕрере темĕн пушанса юлчĕ. Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче пурăнакан кашни ҫыншăнах Платон Павлович хисеплĕ ҫын пулнă. Ҫакăн пек паллă та ăста ертӳҫĕ хăйĕн ĕҫ биографине пирĕн хуҫалăхра пуҫăнни, хăйĕн тăрăшулăхĕпе Ильич яч. хис. хуҫалăх аталанăвĕн ҫирĕп никĕсне туни паян никама та иккĕлентермест. Ял пурнăҫне лайăхлатассине тĕп вырăнта тытрĕ вăл. Пире те – ҫамрăксене – ҫавнах вĕрентрĕ. 1974 ҫулхи утă уйăхĕнчен пуҫласа вăл 5 ҫул хушши Ильич яч. хис. колхоза ертсе пынă. Хуҫалăхăн малашлăх аталанăвĕн никĕсне хывса хăварнă. «Пурăнмалла, ĕҫлемелле, тулăх пурнăҫшăн савăнмалла», – тетчĕ вăл. Хăй тунă пысăк ĕҫсемпе асра юлать вăл Муркаш ен историйĕнче. Платон Павлович – пирĕн пуянлăх.

**А.И. ТИХОНОВ, районти «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫатăн тĕп редакторĕ:**

– П.П. Давыдов тĕрлĕ енлĕ ертӳҫĕ пулнине палăртас килет. Вăл аш-какайпа сĕт, тыр-пулпа ҫĕр улми туса илнипе ҫеҫ ҫырлахман. Сăмах май, вăл ертсе пынă «Ударник» хуҫалăхра виҫĕ пĕчĕк район чухлĕ сĕт сăватчĕҫ, тыр-пулпа ҫĕр улми тухăҫĕ те Йӳҫкассисен чи пысăккиччĕ, вĕсене те пиншер тонна туса илетчĕҫ.

«Ударник» аякра, Элĕк районĕн чиккинче вырнаҫнă пулин те кунта чи малтан асфальт ҫулсем ҫитрĕҫ, килĕрен кăвак ҫулăмпа усă курма пуҫларĕҫ. Кӳршĕри ялсене ҫак ырлăх тепрер вунă ҫул иртсен тин ҫитрĕ. Кермен пек культурăпа йăла объекчĕсем ӳссе ларчĕҫ хуҫалăх территорийĕнче.

Халăхпа канашласа ĕҫлеме пĕлетчĕ Платон Павлович. Ҫак хуҫалăхра «Сурăм хыпарĕ» хаҫат кăларнăран эпир, райхаҫат журналисчĕсем, «Ударник» хуҫалăх ҫыннисен, вĕсен ертӳҫин ĕҫченлĕхĕнчен тĕлĕнеттĕмĕр, вĕсен ӳсĕмĕсемшĕн савăнаттăмăр.

Ял ҫыннисем Платон Павловича виҫĕ хутчен республикăн чи аслă органне – Патшалăх Канашне депутата суйларĕҫ. Ку чыса та районта Давыдовчен виҫĕ хут тивĕҫекен пулманччĕ.

Иртнĕ эрнере пирĕнтен А.П. Айдак уйрăлса кайрĕ, ку эрнере – П.П. Давыдов. Масштаблă ертӳҫĕсем пирĕнтен уйрăлса кайни ҫав тери хурлăхлă.

**Ю.С. ЯКОВЛЕВ, Йӳҫкасси шкул директорĕ:**

– Платон Павлович Давыдовпа нумай ыйтупа канашланă. Шкула килсе ҫӳретчĕ. Эпĕ те хуҫалăх кантурне кайма именмен. Ашшĕ-амăшĕн пухăвĕсене хутшăнатчĕ. Шкула ялан пулăшса пыратчĕ.

Искусство шкулне те вăлах уҫма пулăшрĕ.

Аякран тĕрлĕ делегацисем килсен шкул директорĕ, хуҫалăх ертӳҫи тата вырăнти влаҫ пуҫлăхĕ килĕштерсе ĕҫлеме пултарнинчен тĕлĕнетчĕҫ, пире ăмсанатчĕҫ.

Платон Павлович пулăшнипех шкул тăррине витрĕмĕр, тĕрлĕ сĕтел-пукан туянтăмăр.

Ҫакă та аса килет. Пĕррехинче пирĕн шкула пĕр аталану программинчен кăларса пăрахнăччĕ. П. Давыдов депутат ҫине тăнипе каялла кĕртрĕҫ.

Ăна производство ҫеҫ интереслентермен, ачасен, учительсен пурнăҫĕпе кăсăкланатчĕ. Учительсене тыр-пул та паратчĕ.

Ҫийĕнчех май килмесен каярахпа та пулăшатчĕ. Унпа яланах пĕр шухăш тупнă.

Пирĕн шкул коллективĕ чĕререн хурланать. Чăнах та пысăк ҫухату.

**Пасар 10 ҫул тултарать**

## Сентябрĕн 28-мĕшĕнче чĕнетпĕр!

Район центрĕнче Муркаш пасарĕ ĕҫлеме пуҫланăранпа 10 ҫул ҫитнине савăнăҫлă ларутăрура паллă тăвасси «Ударник» хуҫалăх ертӳҫи П. Давыдов вăхăтсăр вилсе кайнине кура авăн уйăхĕн 21-мĕшĕнчен пĕр эрне каярах куҫать.

**Йĕркелӳ комитечĕ.**

**Саламлатпăр**



Хаклă ҫыннăмăра, юратнă мăшăра, ăшă чунлă аттене, кăмăллă асаттене, ҫывăх тăванăма – Мăн Сĕнтĕр салинче пурăнакан **Михаил Петрович НИКОЛАЕВА** 60 ҫулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Ҫирĕп сывлăх, вăрăм кун-ҫул, иксĕлми телей сунатпăр. Эпир санпа мухтанатпăр, санпа савăнатпăр, сан пек пулма тăрăшатпăр. Эс пурри – пирĕншĕн телей. Тата нумай-нумай ҫул савăнса пурăн.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕ, хăти-тăхлачисем, тăванĕсем тата кӳршисем.**

Юратнă мăшăрăма, аттене, хисеплĕ хуньăшсене, ытарайми кукаҫие тата асаттене – Юнкă ял тăрăхĕнчи Ҫармăçкассинче пурăнакан **Виталий Ильич ХЛЕБКОВА** – ҫуралнă кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Ăшă кăмăллă та таракат ҫыннăмăра нумай ҫул пурăнма ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр. Пĕчĕк мар эсĕ. Санпа пĕрлех ҫак кунсенче хĕрӳ Маша, мăнуку Женя, мăнукун ачи Карина ҫуралнă кунĕсене паллă тăваҫҫĕ. Вĕсене те ăнăҫу, сывлăх, телей пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 3 хĕрĕ, 3 кĕрӳвĕ, мăнукĕсемпе вĕсен ачисем.**

# Хура тăпра ырлăхĕ – халăх пурлăхĕ

## Кая хăвармасăр татса памалли ыйтусем

Патшалăх нумай ачаллă çамрăк çемьесене май килнĕ таран пулăшма тăрăшать. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пĕлтĕрхи пуш уйăхĕн 4-мĕшĕнче «Чăваш Республикинчи нумай ачаллă çемьесене пулăшмалли хушма мерăсем çинчен» Указа алă пуснăччĕ. Унпа килĕшӳллĕн 3 тата ытларах ача çитĕнтерекен çемьесене çурт, хуралтă, дача хăпартма çĕр тӳлевсĕрех уйăрса пама тытăнчĕç. Çемьесемшĕн ку питĕ пысăк пулăшу пулни паллă.

Нумай ачаллă çемьесем çĕр участокĕсем вăхăтра илесси ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем мĕнле ĕçленинчен нумай килет. Шăпах çак ыйту тавра пулчĕ те ĕнтĕ нумаях пулмасть иртнĕ ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен канашлăвĕнче.

Паянхи куна районта пурăнакан нумай ачаллă 57 çемьене çĕр лаптăкĕсемпе тивĕçтермелле. Шута илнисенчен нумайăшĕ пурăнмалли çурт-йĕр тăвас шутлă. Хăшĕ-пĕри – хушма хуçалăх тытасшăн. Паянхи куна вĕсенчен 7-шне кăна çĕрпе тивĕçтернĕ. Çатракассинче, Хорнуйĕнче, Ярапайкассинче – пĕршер çемье, Муркашпа Мăн Сĕнтĕрте 2-шер çемье валли çĕр уйăрнă.

Район администрацийĕн пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн ертӳçи И. Захаров пĕлтернĕ тăрăх паян-ыран нумай ачаллă тепĕр 4 çемье çĕр участокне тӳлевсĕр илме ирĕк паракан сертификата алла илĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Николаевич Тимофеев асăннă тĕллевпе ял тăрăхĕсенче çĕр лаптăкĕсене йĕркелесси мĕнле пынипе интересленчĕ. «Çĕр илме ыйтса çырнă нумай ачаллă кашни çемьене пирĕн çĕрпе вăхăтра тивĕçтермелле. Ку енĕпе хăш-пĕр ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем çителĕксĕр ĕлесе пыраççĕ», – палăртрĕ Ростислав Николаевич.

Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче паян 1 çемье çĕр участокне илме черетре тăрать. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С. Никифорова ăна валли участок хатĕрлесе çитереймен-ха. Кунта хальлĕхе 1 çĕр лаптăкне регистрацилессипе ĕçлеççĕ.

Мăн Сĕнтĕрсен черечĕ вăрăм – 7 йышлă çемье çĕр кĕтет. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Анатолий Лаптев каланă тăрăх паянхи куна 11 çĕр участокĕ йĕркелеме пуçланă. «Документсем хатĕрлесси районти архивран справкăсем илес шая çитнĕ», – терĕ Анатолий Владимирович.

Ильинкăсен нумай ачаллă çемьесем валли çĕр участокне уйăрма йĕркелес ĕç вырăнтан тапранманпа пĕрех. Паянхи куна 3 çемьене çĕрпе тивĕçтермелле ку ял тăрăхĕнче. Çĕр участокĕсене халĕ те шыраса тупса документсем йĕркелеме пуçламан-ха Ю. Перцев. Кам та пулин килсе пулăшасса шанать-ши Юрий Викентьевич?

Катькас ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. Лебедев шантарнă тăрăх çитес вăхăтра вăл 21 çĕр лаптăкĕ валли документсем хатĕрлесе çитерĕ. Кунта нумай ачаллă 9 çемье çĕрпе тивĕçтерме ыйтса заявленисем çырнă.

Муркаш ял тăрăхĕнче 11 йышлă çемье çĕр илме черетре тăрать. «Шанатпăр, кĕтетпĕр», – теççĕ вĕсем. Ял тăрăхĕн администрацийĕ 11-шне валли те çĕр лаптăкĕсем тупса документсене йĕркене кĕртме пуçланă.

Турай, Çатракасси, Оринин, Юнкă ял тăрăхĕсенче çĕрпе тивĕçтерме ыйтса заявлени çырнă нумай ачаллă çемьесем паянхи куна çук. Турайсем 1 çĕр лаптăкне, Юнкăсем 2 çĕр лаптăкне йĕркелеме пуçланă. «Çапах та ку алă усса лармаллине пĕлтермест, малашлăха пăхса ĕçлемелле те ĕçлемелле. Паян мар пулсан ыран çĕр кирлĕ пулĕ», – тет Ростислав Николаевич.

Шетмĕпуçсен паянхи куна 1 çемьене тӳлевсĕр çĕр уйăрса памалла. «Ĕçсем пыраççĕ, тăрăшатпăр, документсем хатĕрлес ĕç вĕçленсе пырать», – шантарчĕ канашлăва хутшăннă Шетмĕпуç ял тăрăхĕн специалисчĕ Галина Яковлева.

Чуманкассипе Ярапайкассинче вара пăр халĕ те «тапранман». Пĕрремĕшĕсен черетре 4 çемье пулсан, Ярапайкассисен 7 йышлă çемье чăтăмсăррăн кĕтет ял тăрăхĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Эльвира Алексеева çĕр ыйтăвĕсемпе ĕçлеме пуçласса.

«Ялăн малалла сарăлма, аталанма палăртса хунă вырăнĕсенче – ял хуçалăхăн пай çĕрĕсем. Çавăнпа эпир йывăр ларутăрăва лекрĕмĕр», – ăнлантарать Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Эльвира Новикова.

«Çĕр лаптăкĕсене хăшĕсем ял çывăхнерех е ялăн аталану перспективи пур вырăнĕсене илме тăрăшаççĕ. Ку тĕлĕшпе вырăнсенчи пуçлăхсемпе специалистсен тимлĕрех пулмалла. Тăван, юлташ е кӳршĕ тăрать сирĕн умăрта – саккун пуриншĕн те пĕр пек», – çирĕп ыйтрĕ Ростислав Николаевич.

Хорнуй таврашĕнче 4 çемье çĕрпе тивĕçтерме ыйтса çырнă. Ял тăрăхĕнче 8 лаптăк йĕркелессипе ĕçсем пыраççĕ.

Йӳçкасси тăрăхĕнче нумай ачаллă 2 çемье çĕр илме кăмăл тунă. Кунта 19 çĕр участокĕ йĕркелессипе ĕçлеççĕ. Ярославкăсем 2 çемьене çĕрпе тивĕçтерме документсем хатĕрлеççĕ.

Çĕр участокĕсене йĕркелесси саккунпа килĕшӳллĕн пулса пымалла. Саккуна пăсса ĕçлесен ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен явап тытма лекĕ. Кашни лаптăка уйăрассипе ĕçхĕл епле пурнăçланнине тĕрĕслесех тăмалла вырăнти пуçлăхсен.

«Октябрĕн 1-мĕшĕччен нумай ачаллă çемьесем валли çĕр лаптăкĕсем йĕркелес ĕçе вĕçлемелле. Паян вырăнти пуçлăхсемшĕн ку чи çивĕч ыйтусенчен пĕри пулмалла», – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ.

Ял хуçалăх çĕрĕсен пайĕсемпе те тимлĕ ĕçлемеллине палăртрĕ Ростислав Николаевич. Хула çывăхĕнче вырнаçнă май Муркаш районĕн çĕрĕсем спекулянтсене питĕ илĕртеççĕ. Ял хуçалăхĕпе ниепле те çыхăнман çынсем вата çынсем патне шанчăка кĕрсе вĕсен ял хуçалăхĕн пай çĕрĕсене саккун нормисене пăсса йӳнĕ хакпа туянаççĕ те хыççăнах хаклăрахпа сутса яраççĕ. Çĕнĕ хуçасем вара çĕр лаптăкĕн «шăпине» хăйсене меллĕ пек татса параççĕ, çĕре тухăçлă ĕçлеттерес вырăнне урăх тĕллевпе усă курмалли лаптăка çавăраççĕ. Ултавçăсем ытларах саккунсене лайăх пĕлмен вата çынсене – çĕр хуçисене – суйласа илеççĕ, вĕсенчен çĕрĕсемпе усă курма доверенность илеççĕ. Çав хутсем çине вата çынсем хăйсен çĕр участокĕсемпе тĕрлĕ операцисем тума ирĕк парса алă пуснине те ăнланмаççĕ. Çак ултава ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен вăхăтра сисмелле, тĕрĕслесе тăмалла тата тивĕçлĕ йышăнусем тумалла.

Паян Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çĕр ыйтăвĕсене уйрăмах пысăк тимлĕх уйăрать. Правительство умне унччен çулсенче çĕр тĕлĕшпе саккунсене пăснă тĕслĕхсене пĕтерес тĕллев лартать. Çав йăнăшсене малашне тумалла маррине тăтăшах палăртать. Унăн принципла тĕллевĕ – граждансемпе патшалăхăн интересĕсене хӳтĕлесси.

Ултавçăсем тĕлĕшпе Чăваш Республикинче пĕрремĕш судсем иртнĕ ĕнтĕ. Явап тытакансем суд процесĕсене тăсассипе çĕр тĕрлĕ мел шыраççĕ, айăплавран çăлăнса юлма тăрăшаççĕ.

Çĕр участокĕсемпе мĕнле усă курмаллине “Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен пусă çаврăнăшĕ çинчен” ятарлă саккун ăнлантарса парать. Çĕр участокĕсене сутас тесен вĕсене кирлĕ пулсан Чăваш Республикин туянма мал пĕлтерĕшлĕ право пур. Çĕр хуçин хăйĕн çĕр лаптăкне сутас тесен чи малтан ăна Республика Правительствине сĕнмелле. Правительство официаллă йĕркепе вăл е ку участок республикăна кирлĕ мар тесен кăна ăна çĕр хуçи виççĕмĕш участника сутма пултарать. Анчах хакĕ республикăна сĕннинчен кая пулмалла мар.

«Усă курман çĕр пайĕсен шăпине те татса пама вăхăт. Кашни тăваткал метр çĕртен бюджета налук кĕмелле. «Хура çĕр – анне кăкăрĕ», – тенĕ ваттисем. Унпа тухăçлă ĕçлеме пĕлсен вăл пире тăрантарать», – çапла пĕтĕмлетӳ турĕ Р. Тимофеев.

Мĕн ĕлĕкрен чăваш çынни ир пуçласа каçчен ака-суха тунă, тырă акнă. Трактор-комбайн пулмасан та çĕр çинче çум курăк ӳсмен, тырă-пулă ешерсе куçа илĕртнĕ. «Хура тăпра ырлăхĕ – пĕтĕм халăх пурлăхĕ», – тенĕ асаннесемпе асаттесем. Вĕсен ырă ятне ярас марччĕ пирĕн...

**Н. ГРИГОРЬЕВА.**

# Пур халăх çынни те хăйне хăтлă туйтăр

## Республикăра

Сентябрĕн 14-мĕшĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн председателĕн çумĕ А. Иванов ертсе пынипе ЧР национальноç ĕçĕсен канашĕн ларăвĕ ĕçленĕ. Унта ĕç тăвакан влаç органĕсен тата федераллă органсен территоринчи представителĕсем, национальноç ĕçĕсен районсенчи канашĕсен ертӳçисем тата ыттисем те хутшăннă.

Ларура республикăри хуласемпе районсенчи канашсен ĕçне вăйлатасси пирки калаçнипе пĕрлех Йĕпреç районĕнчи национальноç ĕçĕсен канашĕн ĕçне тишкернĕ. Культура, национальноç тата архив ĕçĕсен министрĕ В. Ефимов, республикăри национальноç ĕçĕсен канашăн ертӳçин çумĕ, докладпа тухса калаçнă. Пирĕн республикăра пурăнакан тĕрлĕ наци халăхĕсем хăйсене комфортлă туйни пĕлтерĕшлине палăртнă вăл. Халăхсем пĕр-пĕрне ăнланни, йышăнни тата вĕсем хушшинчи килĕшӳ пуласси те çакăнпа çыхăннă. Кирек мĕнле патшалăхăн аталанăвĕ те обществăри килĕшӳпе тăнăçлăхран нумай килет.

Вадим Ефимов хăйĕн сăмахĕнче паянхи кун республикăра национальноç ĕçĕсен канашĕ умĕнче тăракан ытти пĕлтерĕшлĕ самантсем çинче те чарăнса тăнă, патшалăх влаç органĕсен те, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен те ку тĕлĕшпе ĕç-хĕле вăхăтпа тан пырса йĕркелемеллине каланă.

Йĕпреç районĕнчи канашăн ĕçĕ-хĕлĕпе унти канашăн ертӳçи, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Н. Чугаров паллаштарнă. Районти кашни çыннăн ирĕкĕсемпе прависене, вăл мĕнле халăх йышĕнчен пулнине, хăш тĕне тытса пынине пăхмасăр, пĕр тан хӳтĕленине палăртнă.

Ларăва пĕтĕмлетсе А. Иванов республикăна таврăнакан ентешсене, ытти халăх çыннисене пулăшассипе тĕллевлĕ ĕçлемеллине каланă, кунпа пĕрлех наципе культура пĕрлешĕвĕсене тĕрлĕ конкурссене хутшăнса мероприятисем ирттерме грантсем çĕнсе илме суннă.

**Хамăр инф.**

## Гражданисене пĕлме

# Налук инспекцийĕнче – Уçă алăксен кунĕсем

Сентябрĕн 21 тата 22-мĕшĕсенче Чăваш Республикинчи федераллă налук службин районсем хушшинчи 6 № инспекцийĕ Уçă алăксен кунĕсене ирттерет. Унта налук тӳлекен кашни çын çитсе килме пултарать. Налук тӳлессипе тухса тăракан тĕрлĕ ыйтусем çине хурав илнипе пĕрлех çак кунсенче налук уведомленийĕсенчи даннăйсене вырăнтах тĕрĕслеме пулать. Налук инспекцийĕ уçă алăксен кунĕсенче сентябрĕн 21-мĕшĕнче 9.00 сехетрен 21.00 сехетчен, сентябрĕн 22-мĕшĕнче 9.00 сехетрен 18.00 сехетчен ĕçлет. Телефон номерĕсем: 62-4-52 (Муркаш), 8(83547)24-158 (Етĕрне).


## Пĕлтерӳсем. Объявления

* * *

Продаю трактор Т-40 М 1988 г. в., на ходу.
Тел.: 8-937-397-05-09. 2-2.

* * *

Февраль уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура тĕслĕ ăратлă тынашка сутатпăр. Тел.: 8-960-313-54-20.

* * *

Продаю дом в д. Шептаки Моргаушского сельского поселения. Газовое отопление, участок 42 сот, ровный. Дом изнутри обшит ДСП, бревенчатый.
Тел.: 8-927-855-35-15. 1-2.

* * *

ОАО «Птицефабрика «Моргаушская» требуются водители с категорией Е на КамАЗ, категории С на ЗИЛ и ГАЗ, тракторист-экскаваторщик, а также операторы птицефабрик и механизированных ферм без требований к опыту работы. Оплата достойная. Телефон для справок: (83541)65-2-49, 65-2-43. 3-3.

* * *

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок и замок на ручках окон. Шестикамерный профиль по цене трехкамерного. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 6-10.

* * *

В автосервис «Мой мастер» с. Моргауши требуются рабочие с опытом работы: автослесарь – 1 чел.; слесарь по шиномонтажу – 1 чел. Тел.: 8-927-847-45-08.

* * *

СПК ПЗ «Свобода» приглашает рабочих на уборку картофеля. Оплату гарантируем своевременно и достойно.

* * *

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 8-10.

ПОДОЛЬСКАЯ КОНДИТЕРСКАЯ ФАБРИКА "БИ-ЭНД-БИ" (B&B)
(Московская область)
приглашает на работу:
РАБОЧИХ НА ПРОИЗВОДСТВО
(мужчин и женщин без опыта работы)
НАЛАДЧИКОВ ОБОРУДОВАНИЯ
СТОЛЯРА
Проживание в общежитии. Организовано 2-разовое питание с дотацией
Информация по тел.:
89262404692,
8-495-542-40-43,
8-495-996-61-94/95

ООО «Виктория»
* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.
Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.


## Постановление

**Постановление главы Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики от 12.09.2012г. № 5**

**О проведении публичных слушаний по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

В соответствии со ст.28 Федерального Закона РФ от 06.10.2003г. №131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», ст. 14 Устава Юнгинского сельского поселения Моргаушского района **постановляю:**

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» 26 сентября 2012 года в 17 часов 00 минут в здании администрации Юнгинского сельского поселения по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Юнга, улица Малые Чуваки, дом 34 (проект прилагается).
2. Настоящее постановление подлежит опубликованию в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

**Глава Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики В.В. ФОМИН.**

**Проект муниципального правового акта**

**Об изменении разрешенного использования земельного участка**

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального закона от 25 октября 2001 года № 137-ФЗ «О введении в действие Земельного Кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний администрация Моргаушского района Чувашской Республики постановляет:

Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:080403:187 из категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, село Юнга, ул.Центральная, дом 3а, общей площадью 548 кв.м. с «для содержания зданий и сооружений» на «для строительства и эксплуатации магазина».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 26 сентября 2012 года до 17-00 часов.

## Объявления

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:130501:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Хораськин Антон Олегович, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д. Нискасы, ул. Полевая, дом 2. Хораськина Фаина Прокопьевна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д. Нискасы, ул. Полевая, дом 2.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:130501:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, площадью 1,31 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Борцова Галина Павловна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Чурикасы, ул. Передняя, дом 2.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:072501:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования КДП «Гигант», земельный участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:072501, площадью 3,14 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:121301:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Ефимов Александр Алексеевич, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Милюдакасы, ул. Колхозная, дом 32.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:121301:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Дружба», земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:121301.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

---

Чăваш Республикин патшалăх ветеринари службин «Муркаш районĕнчи выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцийĕ» бюджет учрежденийĕн коллективĕ «Ударник» ФГУП ертӳçи

**Платон Павлович**
**ДАВЫДОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

---

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ

**Платон Павлович**
**ДАВЫДОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

---

Коллектив МАУ ДОД «ДЮСШ – ФСК «Сывлăх» выражает глубокое соболезнование родным и близким по поводу безвременной кончины директора ФГУП «Ударник»

**ДАВЫДОВА**
**Платона Павловича.**

---

Муркаш райпо коллективĕ кунта нумай çул хушши хатĕрлев кантурĕнче рабочи пулса ĕçленĕ ветеран

**Тамара Васильевна**
**ЯРИКОВА**

вилсе кайнă пирки çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

---

Чăваш Республикинчи агропромышленноç комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз комитечĕ Муркаш районĕнчи «Ударник» хуçалăха нумай çул ертсе пынă пултаруллă ертӳçĕ

**Платон Павлович**
**ДАВЫДОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

---

Чувашское региональное, Моргаушское местное отделения партии «Единая Россия» выражают искреннее соболезнование родным и близким в связи с безвременной кончиной

**ДАВЫДОВА**
**Платона Павловича,**

директора ФГУП «Ударник», заслуженного работника сельского хозяйства Чувашской Республики, Российской Федерации, Почетного гражданина района, активного члена партии «Единая Россия».

---

Ядринская районная администрация и Ядринское районное Собрание депутатов выражают искреннее соболезнование родным и близким по поводу смерти

**ДАВЫДОВА**
**Платона Павловича,**

директора ФГУП «Ударник» Всероссийского научно-исследовательского института картофельного хозяйства Российской академии сельскохозяйственных наук.

---

«Ударник» хуçалăх дирекцийĕ хуçалăха нумай çул ăнăçлă ертсе пынă

**Платон Павлович**
**ДАВЫДОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

---

«Ударник» хуçалăхри профсоюз комитечĕ, хуçалăх ĕçченĕсем

**Платон Павлович**
**ДАВЫДОВ**

ертӳçĕ вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерешшĕ.

---

Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕн коллективĕ «Ударник» хуçалăх ертӳçи

**Платон Павлович**
**ДАВЫДОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

---

ОАО ГСК «Поддержка» коллективĕ Раççей Федерацийĕн тата Чăваш АССР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, «Ударник» ФГУП директорĕ

**Платон Павлович**
**ДАВЫДОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чун-чĕререн хурланнине пĕлтерет.

---

«Возрождение» ООО «Ударник» ФГУП ертӳçи

**Платон Павлович**
**ДАВЫДОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

---

Чапаев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх кооперативĕ «Ударник» ФГУП ертӳçи

**Платон Павлович**
**ДАВЫДОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

---

Коллективы ООО «Юлия» и ООО «Мастерсити» выражают глубокое соболезнование директору Давыдову А.П. по поводу безвременной кончины отца

**ДАВЫДОВА**
**Платона Павловича.**

---

Йӳçкасси ял тăрăхĕн администрацийĕ тата ял тăрăхĕн депутатсен Пухăвĕ «Ударник» хуçалăх ертӳçи

**Платон Павлович**
**ДАВЫДОВ**

вилнĕ пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланнине пĕлтерет.

---

# Платон Павлович ДАВЫДОВ



2012 çулхи авăн уйăхĕн 17-мĕшĕнче 65 çулти пултаруллă ертӳçĕ, ял хуçалăх производствин анлă тавракурăмлă йĕркелӳçи, «Хисеп Палли» орден кавалерĕ (1986), «Чăваш АССР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» (1992), Чăваш Республикин Хисеп грамотипе наградăланнă (1998), «Раççей Федерацийĕн ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» (1999), Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине тивĕçнĕ (2001), «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орден медалĕпе наградăланнă (2007) Раççейри ял хуçалăх наукисен академийĕн çĕр улми хуçалăхĕн Пĕтĕм Раççейри наукăпа тĕпчев институчĕн «Ударник» федераллă патшалăх унитарлă предприятийĕн директорĕ Платон Павлович Давыдов йывăр чирленĕ хыççăн пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ.

П. Давыдов Муркаш районĕнчи Анатри Панкли ялĕнче 1947 çулхи пуш уйăхĕн 10-мĕшĕнче çуралнă. Ялти хресчен çемйинче ӳснĕскер çĕр ĕçченĕн йывăр ĕçне ачаллах пĕлнĕ. Çав йывăрлăхсене çĕнме те шкул вăхăтĕнчех хатĕрленнĕ. Çавăнпа та каярах çулсенче пурнăçри кашни кăткăс лару-тăруранах вăл çĕнтерӳçĕ пулса тухма хевте çитернĕ.

1966 – 1969 çулсенче Совет çарĕнче службăра тăнă каччă 1969 – 1970 çулсенче Панкли ял клубĕн заведующийĕнче, районти «Пĕлӳ» обществăн ответлă секретарĕнче вăй хунă.

Малашлăха çирĕп пăхакан Платон Павлович 1970 çулта Чăваш совет-парти шкулĕн вĕренекенĕ пулса тăрать. Кун хыççăн вăл 1972 – 1974 çулсенче КПСС Элĕк райкомĕн тата КПСС Муркаш райкомĕн инструкторĕсенче вăй хурать. Хушнă ĕçсене ответлăха туйса пурнăçланипе хăйĕн ĕçлеслĕхне кăтартать. Çакна шута илсех ăна 1974 çулта Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăха ертсе пыма суйлаççĕ. Нумай çĕнĕлĕх илсе кĕрет вăл хуçалăх аталанăвне. Çакна курса çамрăк ертӳçĕне 1979 çулта Муркаш райĕçтăвкомĕн ял хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ пулма çирĕплетеççĕ. Кĕçех вăл районти халăх депутачĕсен ĕçтăвкомĕн председателĕн çумĕ пулса тăрать.

1980 çулта Чулхулари ял хуçалăх институчĕн экономикăпа йĕркелӳ институтне ăнăçлă вĕренсе пĕтернĕ хыççăн 1981 çултан пуçласа паянччченех Раççейри ял хуçалăх наукисен академийĕн çĕр улми хуçалăхĕн Пĕтĕм Раççейри наукăпа тĕпчев институчĕн «Ударник» федераллă патшалăх унитарлă предприятине ертсе пычĕ.

Платон Павлович Давыдов ял хуçалăхĕнче ĕçленĕ çулсенче яланах производствăн ăста йĕркелӳçи пулнипе палăрса тăчĕ. Ĕçре пухнă опытне тата пуян пĕлĕвне хăйне шаннă предприятие тăнăç ертсе пыма усă курчĕ. Алă айĕнчи ресурссемпе эффективлă усă курни ăна производство рентабельлĕхне çӳллĕ шайра тытма пулăшрĕ. Малта пыракан технологисене пурнăçа кĕртсе пыни производствăна аталантарассипе те, выльăх апатне упрассипе те ыттисемшĕн яланах тĕслĕх вырăнĕнче пулма май пачĕ.

П. Давыдов ертсе пынă «Ударник» хуçалăх нумай çул хушши çĕр улмин таса вăрлăхне туса илессипе ĕçлерĕ. Унпа ытти хуçалăхсене тивĕçтерсе вĕсенне те тухăç кăтартăвне ӳстерсе ытларах тупăш илме çул уçса пачĕ.

Хăй суйласа илнĕ ĕçĕн энтузиасчĕ пулнă май Платон Павлович тĕшĕллĕ тырă-пулăпа пăрçа йышши культурăсен тата çĕр улмин тухăçне, выльăхсен продуктивлăхне хăй ĕçлеме пуçличченхи вăхăтринчен темиçе хут хăпартма мехел çитерчĕ. «Ударник» хуçалăх П. Давыдов ертсе пынипе çĕр-шыври йывăрлăхсене пăхмасăрах тăтăш малалла аталанчĕ: хуçалăхра çĕнĕ фермăсем çĕкленчĕç, ялсенче культурăпа йăла тата вĕрентӳ объекчĕсем çĕнĕрен хута кайрĕç, ялсене тата производство объекчĕсене асфальт çулсем çитрĕç, хуçалăх территорийĕнче пурăнакан çынсем тата социаллă сфера объекчĕсем малтисен шутĕнче çут çанталăк газĕпе усă курма пуçларĕç.

Хăй суйласа илнĕ çултан Платон Павлович ĕмĕр тăршшĕпех пĕр утăм та уйрăлмарĕ.

Ĕçĕпе шанăçа тухнăскер, П. Давыдов 1990 – 1994 çулсенче Чăваш АССРĕн Верховный Совечĕн депутатне, 1994 – 1998 тата 2002 – 2006 çулсенче Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутатне суйланчĕ. 1975 – 2002 тата 2006 – 2010 çулсенче вăл халăх депутачĕсен районти Совечĕн тата районти депутатсен Пухăвĕн депутачĕ пулчĕ. 2010 çулта районшăн тунă тава тивĕçлĕ ĕçĕсене кура ăна Муркаш районĕн Хисеп Кĕнекине кĕртрĕç.

Платон Павлович ыттисем хушшинче яланах тăван çĕре юратнипе, хăй ертсе пыракан хуçалăх ĕçнехĕлне тĕплĕн пурнăçланипе палăрса тăчĕ. Пуçаруллă та ырă кăмăллă, çынна пулăшма ялан хатĕр ертӳçĕ халăхра пысăк хисепре пулнă.

Йӳçкасси тăрăхĕн, районăн, Чăваш Республикин аталанăвне пысăк тӳпе хывнă Платон Павлович Давыдовăн ĕçĕ нихăçан та манăça тухмĕ, сăнарĕ пирĕн чĕресенче упранĕ.

**Район администрацийĕ.**
**Депутатсен районти Пухăвĕ.**
**Ветерансен районти Канашĕ.**
**АПК ĕçченĕсен профсоюз райкомĕ.**
**Предприятисемпе организацисен ертӳçисем.**
**Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем.**

---

Принимаем КАРТОФЕЛЬ на крахмал. Место приемки: Вурнарский район, д. Кумаши. По вопросам сдачи картофеля просим обращаться по телефонам: (8352) 44-11-65, (83538) 2-70-43. 6-6.

**Приглашаем к участию в долевом строительстве (реконструкции) 12-тиквартирного трехэтажного жилого дома в с. Б. Сундырь, ул. Анисимова. Тел.: 8-967-470-00-38. 9-10.**

## Прогноз погоды

| | среда 19 сентября | | | | четверг 20 сентября | | | | пятница 21 сентября | | | | суббота 22 сентября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | **+11** | **+14** | **+15** | **+12** | **+11** | **+13** | **+15** | **+12** | **+10** | **+14** | **+19** | **+14** | **+13** | **+15** | **+17** | **+15** |
| Давление мм | 751 | 752 | 752 | 752 | 752 | 753 | 752 | 752 | 751 | 750 | 749 | 748 | 748 | 748 | 747 | 746 |
| Влажность % | 90 | 74 | 63 | 85 | 88 | 80 | 66 | 80 | 88 | 72 | 56 | 77 | 77 | 68 | 60 | 64 |
| Ветер м/сек | 1 | 1 | 0 | 1 | 2 | 2 | 3 | 2 | 3 | 3 | 5 | 3 | 4 | 3 | 5 | 4 |
| | З | З | ШТЛ | Ю-З | Ю | Ю | Ю | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю | Ю | Ю-В | Ю-В | Ю-В |
| Солнце восход / заход | | 06:34 | 18:58 | | | 06:35 | 18:56 | | | 06:37 | 18:53 | | | 06:39 | 18:50 | |
| Луна восход / заход | | 11:11 | 19:53 | | | 12:33 | 20:31 | | | - | - | | | 14:54 | 22:12 | |

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 18.09.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4678.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.